Инв. № 391.
26-30

...спуплĕкĕнҪи сывлăх
...иссариаҪĕ

В. КОРПĂВ тухтăр

# ТАСА ПУРĂННИ СЫВЛĂХА СЫХЛАТ

С. ИВАНОВ куҫарнă

ҪĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
Шупашкар 1927

ҪĂВАШ РЕСПУП. СЫВЛĂХ КОМИССАРИАҪĔ

В. КОРПĂВ тухтăр

# ТАСА ПУРĂННИ СЫВЛĂХА СЫХЛАТ

С. И. ИВАНОВ куҫарнă
Ретактăрĕ Н. УРХИ

ҪĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
Шупашкар—1926

Типография
„ЧУВАШСКАЯ КНИГА“
Чебоксары, Б.-Советская, 6.

Чувашлит № 1011 Напеч. 3000 экз.

## Таса пуранни сывлаха сыхлаŧ.

„Таса пуранни сывлаха сыхлаŧ", тенĕ сăмахсене кам илтменши? Ђăнах та, таса пурăнни лайăх, тасамар пурăнни лайăх мар: ăна такам та пĕлет. Анђх çапах та, ăна пĕле тăркађах, нумайĕшĕ ђыссăр, тасамар пурнаççĕ. Ытти патшалăхсене кайса курсан тĕлĕнмелле: йепле унта хуласем, йалсем, килçуртсем таса! Пирĕн хуласем, йалсем вĕсен пек таса мар. Пирĕн халăх тасамар пурăнни ĕлĕкрен пыраŧ. Мĕскертен вăл килетши? Пирĕн халăх ĕлĕкренпех пусмăрта пурăннă, ăна ĕлĕкренпех тĕттĕмре тытнă, мĕншĕн тесен вĕренсен, вăйланса кайсан улпутсене, патшасене пăхăнмасŧ, тенĕ. Çавăн пирки пĕрмайах ђухăн пулнă, хăйне хăй нихăш йенђен те малалла йарайман: çутта тухас йенђен те, хуçайствă йенђен те. Тĕттĕмре пурнакан выçă халăхăн тасалăх çинђен шухăшлама вăхăт та пулман: вăл çĕрĕн-кунĕн хырăма тăрантарасси çинђен анђах шухăшланă; çĕрĕ унăн сахал пулнă, тырăсем пулман, çĕр ĕçне

тума вăл пĕлсе çитеймен, нађар тунă, çавăнпа вăл çултан çул нађарланса пынă. Хуласене хапрăксене ĕçлеме кайнă халăх хуçасен аллине кĕрсе ÿкнĕ. Екконоимĕкпа политтĕк тĕлĕшĕнђен пусмăрта пурăннăран халăх тĕттĕм пулнă, нушаран тухма пĕлмен. Револђутси пулађђен пирĕн халăха виç йапала хĕстерсе пурăннă: ђухăн пурăнăç, политтĕк йенђен ирĕк çукки, тата тĕттĕм пулса пĕлмесĕр пурăнни. Çав виç йапала халăха ђыссăр, тирпейсăр, пылђăк ăшĕнђе пурăнма вĕрентсе йанă, йут патшалăх çыннисене пиртен çак тĕлĕшрен пит тĕлĕнтермелле тунă.

Çак кĕнекере тасалăх етем пурнăçĕнђе мĕншĕн кирли çинђен каласа кăтартнă. Ăна пĕлни пире ĕлĕкхи пурнăçăн усал тивлетĕнђен—тасамарлăхран хăтăлма кирлĕ. Халђхи çĕнĕ ирĕклĕ Раççейре пирĕн хамăр пурнăçа тасарах, лайăхрах, сывлăхлăрах туса йарасђĕ. Ку кĕнеке çавăн пек пурнăça тума пулăшас тет.

## Етем хăй таврашĕнђи сывлăша йепле пăсат.

Пÿртре çын нумай ђухне пÿртри сывлăш ăшăнса кайат, вара сывлама пăђă пулат. Вăл

ак мĕскертен килет. Етем ӳђĕ пĕрмайах пĕр пек ăшă пулаť. Çав ăшă хăй виçинђен нихçан та ђакмасť. Сывă çынăн ӳт ăшши (температура) 37 кратăс, йе пăртак кайарах пулаť. Паллах, **етем сывланипе пӳртри сывлăш ăшăнмалла.** Ђăнах та, етем пӳртри сывлăша хутса çунтарнă кăмака пек ăшăтаť.

Каллах тата етем сывланă ђухне ун ăшĕнђен шыв пăсĕсем пит нумай тухаççĕ, çавăнпа пӳртри сывлăш нӳрленсе кайаť. Шыв тата етем ӳтĕнђен тарпа тата ытларах тухаť. Çапла етемрен тухнă нӳрĕ сывлăша кайса сывлăшра çӳрет, пӳртри сывлăша кантăксене уçса тасатмасан (уçăлтармасан), сывлăшри нӳрĕ сивĕ йапаласем çине ларма пуçлаť: кантăк çине, пӳрт пĕренисем çине, т. ы. йапаласем çине ларат. Çавăн пирки пӳрт йĕпенсе тăраť, унта сывлăш пăсăлса кайаť. Епĕр сывланă ђухне ăшран шыв пăсĕсем тухни ак çакăнтан паллă: хĕлле сивĕ сывлăш çине сывласан, пирĕн ăшран тĕтре тухнă пек тухаť, епĕр ăна сивĕ çинђе сывлани курăнаť тетпĕр.

**Сывлăш ытлашши ăшăнса кайсан,** тата **вăл нӳрленсе кайсан, ун пек сывлăш етем сывлăхĕшĕн пит сийенлĕ.** Ун пек сывлăшпа

сывлама етеме пăђă, щăрăх, ăшран сывлăш тухмасť. Çавăн пек пўртре етем ўтĕнђи температтур ђирлĕ çын вĕриленсе кайнă пек вĕриленсе кайаť. Вĕри, нўрĕ пўртре етем нумайђђен тăрсан, тата вăл çитменнине унта ĕçлесен, унăн ўђĕ ытлашши вĕриленсе кайнă пирки етеме **ăшă çапма** пултараť. Ун пек ђухне етемĕн пуç ыратаť, пуç çаврăнаť, ăш пăтранаť, етем ăнран кайаť, питех йăвăр лексен вилсе те кайаççĕ.

Пўртри сывлăш халăх нумай сывласа тултарнипе хĕрсе çитнинђен пуçне, нўрленсе кайнинђен пуçне тата урăх йенђен те улшăнаť. Сывланă ђухне етем тулашри сывлăшран хăй ăшне йўçамăш (кислорот) сывласа кўртет. Йуçамăш тени вăл пире пит кирлĕ кас: унсăр пуçне çĕр çинђе нийепле ђĕрђун та пурăнма пултараймасť. Етем хăй ăшне сывласа илнĕ сывлăша калла сывласа кăларнă ђухне, çав калла тухакан сывлăшра йуçамăш сахал; ун вырăнне ăшран тепĕр тĕрлĕ кас тухаť—**кăмрăк йўççи**. Вăл кас çынна кирлĕ мар, сийенлĕ те. Сывлăшра кăмрăк йўççи нумай пулсан, йуçамăш сахал йулсан, ун пек сывлăш пире йурăхлă мар, ун пек çĕрте çын пăђăланса вилет.

Халăх нумай çĕрте **сывлăш урăх кассем тухса та пăсăлать.** Ун пек кассем тар çĕрнипе пулаççĕ, тар çăвĕ çĕрнипе, ура тарĕ çĕрнипе пулаççĕ, тата пыршăсенђен тухаççĕ; пыршăсенђен кўкĕрт-шывлăх йатлă кас тухать т. ы. те.

Çак халђ каланă кассем питĕ сийенлĕ: вĕсене сывлăшпа пĕрле сывласа илсе, етем хăйне хăй пысăк сийен тăвать. **Халăх нумай çĕрте, ђўређесене уçса сывлăша тасатман çĕрте, халăх хăйне тирпейлĕ тытман çĕрте сывлăш йаланах усал пулать, ун пек çĕрте етем сывлăхне йаланах йăвăр килет.**

Пăсăк сывлăшпа сывласа пурнакан çынна йаланах йăвăр: вăл шуралса кайать (йунĕ сахал), унăн пуç ыратать, апат анмасть, çавăнпа вăл нађар çийет, тата ыт. те. Пит пăђă çĕрте çын тăнран кайса ўкет, хăшхăш ђух вилсе те кайать.

**Пўртри сывлăш етем сывланипе çеç пăсăлмасть.** Вăл тата ак мĕнле пăсăлма пултарать: килкартине тасамар тытсан, унта тислĕк, çўпçап куписем, т. ы. пулсан. Ун пек ђухне пўртри сывлăша ђўређесене уçса тасатас тесен те, пўрте пĕрмайах усал сывлăш кĕрет.

Пурнакан пӳртпе выђӑх картине пӗрле витсе тӑвас пулмаст. Вырӑссем пӳртне те, килкартине те пӗрле витсе лартнӑ. Килкарти тулли тислӗк, шӑрш; ҫав шӑрш тӳррех пӳрте



Хӗлле епӗр пӳртсене усӑлтармастпӑр. Ҫавӑн пирки епӗр хамӑр та, пирӗн ађасем те ђирлеҫҫӗ те, вилеҫҫӗ те.

кӗрет. Усал кассем пӳрте сахвутсенђен кӗреҫҫӗ, ҫавӑнпа сахвутсене тӗплӗрех тумалла, тасарах тытмалла. **Пӳртре лайӑх, таса сывлӑш пултӑр тесен килкартине, сахвута, выђӑх картисене, витисене таса тытмалла.**

Хĕлле хамăр пурнакан пӳртре сысна çурисем, ђăхсем, путексем, пăрусем усрани тата ытларах сийенлĕ. Йалсенђе выљăхсем валли ăшă витесем çук пирки пăрусене, путексене пӳртре усраççĕ.

Выљăхсем пӳрте те пит вараласçĕ, сывлăша та пит пăсаççĕ, çавăнпа етем сывлăхне сийен тăваççĕ.

Каллах тата **пӳртри сывлăш тусанпа пит пăсăлаŧ.**

Пӳрте тусан, урасене тасатса кĕмесен, ура çумне çыпăçса пит нумай кĕрет. Тусан çинђе тĕрлĕрен усал ђирсем саракан микропсем пулаççĕ, тусанпа пĕрле вĕçсе çӳреççĕ; тусан, пуринђен ытла, çавăнпа усал. Таса уйра, вăрманта—тусан çук çĕрте, ђир тăвакан микропсем сывлăшра çук, пурнакан пӳлĕмсенђе вĕсем пит нумай. Сывлăша вĕсем пуринђен ытла ђирлĕ çынсен сурђăкĕнђен лекеççĕ. Ђаххуткă çав майпа сарăлаŧ. Урайне сурнă сурђăк типсе тусана кайаŧ те, вара микропсем пӳртри сывлăшра çӳреççĕ.

Нумай çĕрсенђе, етем сывлăхĕшĕн тăрăшакан çĕрте, урамсенђе йе халăх ытларах пухăнакан вырăнсенђе ăçта килђĕ унта сурма

хушмаççĕ. Хуласенҫе хушман çĕре сурнăшăн штрав тӳлеттереççĕ, йе темиçе талăклăха хупса лартаççĕ. Унта кашни тĕлсĕр суракан çынна - усал тăвакан çын шутне, çынна сийен кӳрекен çын шутне хураççĕ.



Çулла вăхăта таса сывлаш çинҫе ытларах иртерес пулат. Таса сывлăш—ҫирпе вилĕмĕн тăшманĕ.

Епĕр ĕнтĕ сывлăша пăсакан йапаласем çинҫен пĕтĕмпех те тенĕ пек каласа тухрăмăр. Кун çумне тата кăмакаран тухакан сĕрĕмпе тапак тĕтĕмне илсе каласан, — сывлăша пăсакан йапаласем çинҫен пĕтĕмпех те каласа пĕтертĕмĕр темелле.

**Сывлăш таса пултăр тесен мĕн тумала-ши?** Паллах, сывлăш таса пултăр тесен, сывлăша пăсакан, хаљ каласа тухнă сийенлĕ йапаласене хамăртан сирес пулаť. Пӳртсенђе, пурнакан пӳлĕмсенђе сывлăш ан пăсăлтăр тесен, пирĕн çуртра та, ун таврашĕнђе те, — пур çĕрте те, хамăра хамăр та, хамăр ӳте те, тумтирсене те **таса, тирпейлĕ тытмалла**. Кунсăр пуçне тата хамăр пурнакан пӳрте ђӳређесене уçса пăрахса уçăлтармалла. Пуринђен ытла пӳрте хĕл вăхăтĕнђе уçăлтарас пулаť, мĕншĕн тесен хĕлле, кантăксене сĕрсе лартсан, пӳртре сывлăш пăђă тăраť. Сывлăша уçăлтарма ђӳређере тунă фортăђкăсене, ђӳређе уççисене, алăксене уçмалла. Ђӳређепе алăка уçсан, пӳртри сывлăш хăвăртрах тасалаť. Сывлăш тата вут хутнă ђухне те тасалаť. Пуринђен ытла вăл кăмака хутнă ђухне алăкпа ђӳређесем уçсан пит лайăх тасалаť. Апла тусан пӳрт сивĕнсе кайаť тесе каласси çук; мĕншĕн тесен пӳрт кăмака хутнă ђухне çеç ăшăнмасť, пуринђен ытла мăрйине хупсан ăшăнаť. Епĕр нумайĕшĕ сивĕ тесе уçă сывлăшран хăратпăр: пăсăк сывлăш сийен кӳнине пĕлесшĕн мар. Таса, уçă сывлăш нихçан та

усал туман, вăл пире усă анђах Хăш кўрет. ђире, сăмахран ђаххуткăна, таса сывлăшпа тўрлетеççĕ.

**Тусан ан пултăр** тесен, ак мĕн астуса пурăнмалла: пўрте кĕнĕ ђухне ура çине тусан çыпçăнса кĕресрен **урасене тасатса кĕмелле**. Пўрт таврашне, пўлĕмсене таса тытмалла. Пўрт ăшне тасатнă ђухне ђўређесене, алăксене уçса йамалла, шăласса шывпа йĕпетнĕ йапалапа шăлмалла, вара тусан вĕçмест. Типĕлле шăлсан, тусана пĕр çĕртен тепĕр çĕре вĕçтерни çех пулаť. Пирĕн тата килçуртра микропсем пуласран сыхламалла. Вĕсем ан пулђђăр тесен, ђўређесене, алăксене, каланă пек уçса, пўртри сывлăша тасатмалла, унтан тата, пўртре урайне сурма пăрахмалла. Сурма уйрăм сурмалли йапаласем, савăтсем пулмалла. Суракан савăта хутран кĕл сапмалла. Кайран сурнă сурђăксене кĕлпе пĕрле сахвута кăларса тăкмалла, савăтне вĕри шывпа вĕрилесе тасатмалла, вара ђир саракан микропсем пĕтеççĕ.

Урайне сурни ђир сараť, çавăнпа вăл йăлана пăрахмалла.

## Тăпрапа килçурт тавраш йепле вараланма пултараççĕ.

Етем хăй ĕмĕрĕнђе йĕритавра пит нумай усал, тасамар йапаласем сараť. Пĕр йенђен, етем хăй ăшĕнђен **шăкпа апат йулашкисене** кăларса пурăнаť. Пысăк çын вăл йапаласене пĕр çул хушшинђе хĕрĕх витрене йахăн кăлараť. Тепĕр йенђен, етем тĕрлĕрен мăшкăлтăк шывсем кухнђăран, мунђаран, кĕпейĕм çунă хыççăн кăларса тăкаť; кункаçа ун пек мăшкăлтăк шывсем çын пуçне йалта ик витрене йахăн пухăнаççĕ, хуласенђе унтан та ытларах пухăнаť. Мăшкăлтăк шывсемсĕр пуçне кил таврашĕнђе тата **тип çўпçапсем** урайсем шăлсан, апатсем çинĕ хыççăн кунне çын пуçне виç кĕрепенкке йахăн пухăнаççĕ. Каллах тата выљăхсем усраса кил таврашĕнђе **мĕн ђухлĕ тислĕк** пулаť. Çапла етем пурăннă килçурт таврашĕнђе тĕрлĕрен тасамар йапаласем пухăнаççĕ. Çав йапаласем пăсăлаççĕ, çĕреççĕ, шăршланса кайаççĕ. Вĕсенђен епĕр сывлакан **сывлăш пăсăлаť,** епĕр çўрекен **тăпра вараланса** пĕтет, вĕсем епĕр ĕçекен, епĕр тыткалакан **шыва** кайаççĕ.

Ҫав тасамар йапаласенҗе тем җухлĕ микроп пурăнаҭ. Вар тифне тăвакан микропсем, халер җирне, йунлă варвитти җирне тăвакан микропсем ҫавăн пек ҫĕрте пулаҫҫĕ. Вĕсем ҫав тасамар йапаласенҗен тăпрана, шыва лекеҫҫĕ. **Тислĕкпе ҫӳпҫап** ҫинҗе тем җухлĕ шăна ĕрҗет. Шăнасем урисем ҫумне ҫыпăҫтарса тем җухлĕ йерекен җир сараҫҫĕ.

Етем сывлăхлă ҫĕрте пурăнтăр тесен, ун пӳрҗĕ-ҫурҗĕ таврашĕнҗе **тăпра та, сывлăш та, шыв та таса пулмалла.** Ҫавăнпа етем пурăннă ҫĕрте пухăнакан тĕрлĕрен тасамар йапаласене пухăннă ҫемĕн тасатса тăмалла. Пысăк хуласенҗе вĕсене йухтарса йама ҫĕр айне каналсем хураҫҫĕ, вара тасамар йапала ҫĕре сăрхăнса йулмасҭ: трупасем тăрăх инҫе, хула хыҫне йухса тухаҭ. Ҫӳпҫапа пăртак пухăнсанах кил таврашĕнҗен айакка кăларса тăкаҫҫĕ, вăл вара унта ҫĕрсе ҫĕр пулаҭ (тăпраланаҭ).

Йалсенҗе, тата шыв йухмалли трупасем лартман хуласенҗе тăпра пит вараланса кайаҭ.

Пирĕн патшалăхра, халăх хушшинҗе, тасарах пурăнас тесе нимĕскер те тумаҫҫĕ. Лайăххăн сахвутсем те ҫук: ҫыннисем тула тухма

выҙӑх картине кайаҫҫӗ, ҫуртсем хушшине ҫӳреҫҫӗ. Унтан вара ҫав пӑрахӑҫа ҫӑмӑр шывӗ йухтарса кайаҭ, етем урипе выҙӑх урине ҫыпӑҫса кайаҭ, халӑх ӑсакан шыва лекет, сывлӑша пӑсаҭ. Мӑшкӑлтӑк шывпа ҫӳпҫапа, тислӗке килҫурт таврашнех кӑларса тӑкаҫҫӗ. **Ҫавӑнпа ҫулла пирӗн аҙасем йунлӑ варвиттипе вилеҫҫӗ, пысӑк ҫынсем вар тифӗпе, халерпе вилеҫҫӗ.**

Ун пек ан пултӑр тесен, сахвутсене лайӑхрах тумалла: **вӗсене тасатса илмелле тӑвас пулаҭ.** Сахвутсене **шыв ӑсакан ҫӑлтан (пусӑран), тарасаран** инҫерех тумалла; сахвут лакӑмӗсене пура йарса тумалла. Пурисене, тӗпӗсене витӗр тасамар йапала тӑпрана сӑрхӑнмалла мар тумалла Сахвута тасатсах тӑмалла. Ахаҙ кӑларса тӑкаҙҙен, унпа пахҙасене, анасене ҫемҫетме те аван, анҙах ана ҫине пӗҙӗккӗн, виҫипе анҙах сапаламалла. Сахвута ҫийелтен лайӑх хупмалла тӑвас пулаҭ, шӑрш тухмалла тӑвас пулмас**ҭ.** Ӑшҙикне те йаланах таса тытмалла.

Пирӗн лайӑх тунӑ сахвутсене те таса тытмаҫҫӗ: пит вараласа пӗтереҫҫӗ; урайӗнҙе ура пусма та таса вырӑн ҫук. Ҫавӑн пек тасамар

тыткалакан сахвутра пĕрмайах шăрш тăрат̆, унтан ђир те сарăлма пултарат̆. Сахвута вăхăђĕ-вăхăђĕпе **ђир сармалла мар туса таса-тас пулат̆:** урайне, айаккисене, ура пусмаллисене вĕри кĕл шывĕпе (сĕлтĕпе) çумалла, шăтăкне акшар (исвĕс) сапмалла.

Çўпçапа, тислĕке, кил таврашĕнђи тĕрлĕ пăрахăç йапаласене килçуртран инçерех тытмалла, вĕсене пуçтарма йешђĕксем лартмалла; шăнасем йересрен йешђĕксене хупăлђаллă тумалла. Пухăннăçемĕн кирлĕмара йешђĕкрен йал тулашне илсе кайса пăрахмалла. Тислĕк çинђе шăнасем пит ĕрђеççĕ, çавăнпа тислĕке кил таврашĕнђе нумай тăратмалла мар, пухăннăçемĕн анасем çине кайса тăкмалла. Тип çўпçапа çунтарсан аван, унăн кĕлне тислĕк вырăнне уйа тăкмалла.

Тата пирĕн килçуртсем килкартинђен йе урамран çыпăçса, йерсе кĕрекен пылђăкпа, тусанпа вараланаççĕ. Пўрте пылђăк йе тусан йерсе кĕресрен, урасене тасатмалла терĕмĕр. Урамсемпе килкарти таврашне таса тытсан та пит аван. Йут патшалăхсенђе вăл йенђен пит хытă пăхаççĕ: унта хуласенђе кăна мар, йалсенђе те урамсене **ђул сарнă.** Çуртсем

тавра **пĕҫĕк йăвăҫ пахҫисем тунă.** Урамсене кашни кунах шыв сапаççĕ, шăлса тасатаççĕ, çӳпçапсене, тасамар йапаласене пĕртте тытмаççĕ. Çапла урамсене, йал таврашсене таса тытсассăн, пӳртçурта таса тытма та çăмăл. Килçурт ăшĕнҫе пуринҫен ытла кухњăна таса тытмалла, апатçимĕç тăратакан пӳлĕмсене таса тытмалла. Керманире ĕçлекенĕн йе хресҫенĕн ҫăн таса пӳлĕмĕ кухњă. Унта кил хуçи арăмĕ кухњăна темĕн пек таса тытаť, ăна такама кăтартсан та вăтанмалла мар. Пирĕн ун пек мар: ăçта апат пĕçернĕ, хатĕрленĕ çĕрте пирĕн темĕн ҫухлĕ таракан, хăрăм йĕритавра хуралса хытса ларнă. Сĕтел таврашĕнҫе темĕн ҫухлĕ шăна пулаť. Вĕсем килкартинҫен кĕреççĕ. Килкартинҫе вĕсем пуринҫен ытла, çывăхра тислĕк пулсан, çӳпçап купи пулсан пит нумай пулаççĕ. Çапла апатçимĕçе тасамар тытсан, тасамар хатĕрлесен ҫир йерме пултараť.

Çавăнпа етем сывлăхне усрасси çинҫен вĕрентекен кикийен пĕр ҫарăнмасăр, пĕр ывăнмасăр: **хăвăр апатăра таса тытăр, апат çывăхне шăнасем ан йарăр**, тет.

пуҫне, тата хăй витĕр пирĕн ӳтпĕве кирлĕ мар йапаласене кăларса тăрать; ҫав йапаласем пирĕн ӳтрен тир витĕр тарпа тухаҫҫĕ. Вăл ҫакăнтан паллă. Ҫын ҧирлесен тепĕр ҧухне тухтăрсем ытларах тарлама хушаҫҫĕ, мĕншĕн тесен тарласан, тарпа пĕрле ӳте йăвăрлантарса тăракан йапаласем тухаҫҫĕ, вара ҧирленĕ ҫынна ҫăмăлтарах пулать.

Тар тухма етем тирĕнҧе ҫавăн пек тар тухмалли оркăнсем пур — парсем. Тата етем тирĕнҧе тар ҫăвĕ тухмалли парсем пур. Вĕсенҧен тухакан ҫу тире сĕрсе ҫемҫетет.

Етем хăй ӳтне ҫумасăр пурăнсан, тир ҫăвĕпе тар тухса хытса ларать те, пар анисене питĕреҫҫĕ. Вара парсем хăйсем туса тăракан ĕҫне тума ҧарăнаҫҫĕ.

Ҫийелте, ӳт ҫинҧе, тарсăр, ҫусăр пуҫне тата ытти йапаласем те нумай. Унта тир кивелсе пулнă кирĕк пулать, ҫӳҫсем пулаҫҫĕ. Каллах тата тир ҫинҧе микропсем нумай. Вĕсем унта ҫынна сийен тăваканисем те пулаҫҫĕ. Ӳттире таса тытмасан, микропсем тир ăшне кĕрсе шатрасем, кĕсенсем, ҫăпансем кăлараҫҫĕ. Тепĕр ҧухне ҫăпансем тухса етем вилме те пултарать.

Çапла хаљ каласа панӑ пек ӳттир вараланса тӑнине илсен, ун çинђе микропсем пулнине илсен, ӑна çуса тасатсах тӑрас пулаҭ. Пӗтӗм ӳте çуса тасатмалла, пуринђен те ытларах тарлакан вырӑнсене (хулайсене, пӗçхушшине, урасене, т. ы.) лайӑхрах çӑвас пулаҭ. Çӑвӑнасса кашни кун çӑвӑнас пулаҭ, тата супӑњпе çӑвӑнас пулаҭ, алсене, питкуçа шывпа анђах ђӳхесен, вӗсем лайӑххӑн тасалмаççӗ, вара алшӑлипе шӑлнӑ ђухне хурасем алшӑли çине ларса йулаççӗ. Алшӑлипе хурасене сӑтӑрса илме шӑлмаççӗ, çуса тасатнӑ ӳте типӗтсе илме анђах шӑлас пулаҭ. Çапла куллен çӑвӑнса пурӑнма çынӑн пӗђикрен вӗренсе каймалла.

Ӳте çеç мар, пуçа та таса тытмалла. Таса тытас тесен, пуçа шакла илес пулаҭ: шакла илсен, ӑна çуса тасатма çӑмӑлтарах. Пуçа таса тытмасан, пыйтӑсем йереççӗ, кукша тухаҭ, тата ытти ђирсем пулаççӗ. Вӗсем çинђен епӗр малалла калӑпӑр.

Хамӑра таса тытас тесен, ђӑн лайӑххи — мунђа кӗни, тата çулла шыва кӗни. Мунђа кӗрсен, ӳттир тасалаҭ, пар аннисем уçӑлаççӗ, йун хӑвӑртрах çӳрет, сывлӑш уçӑрах тухаҭ,

етем çăмăлланса кайаť. **Кикийен хушнă тăрăх мунђана ернере йе ик ернере пĕрре кĕрсех тăрас пулаť. Кашни кун пите, алсене, мăйа, кăкăра, хулайсене, т. ы. çăвас пулаť. Апат çиме ларнă ђух алсене çумасăр нихçан та лармалла мар.**

Тата пĕрик сăмах тулашран килсе çыпăçакан хура çиђен каласа парар. Пирĕн тумтир çинђе тем ђухлĕ тусан, хура çакланса çӳрет. Вăрçă вăхăтĕнђе, хĕрлĕ çар салтакĕ тăхăнакан ђаплă шинел çи ђе икĕ кĕренккене йахăн хура-тасамар пухăннă, çав хура-тасамар çинђе микропсем те сахал пулман.

Çавăнпа тумтире кулленех тасатмалла, **кашни кунах** тусанне шаккаса (хулласа) кăлармалла. Тумтир пуринђен ытла ĕçре хуралаť. Çавăнпа кикийен ĕç вађђи уйрăм тумтир çĕлеме хушаť. Ун пек тумтир тума май килмесен, умма саппун та пулин çакас пулаť. Кухђăра ĕçленĕ ђухне таса саппунсăр йе халатсăр ĕçлеме йурамасť.

Епĕр çисе пурăнакан апат пит таса пулмалла. Апата тасамар алсемпе йе тасамар çи-пуçпа вараланă пирки йăвăр ђирсем пуçланса кайма пултараççĕ.

Кĕпейĕме епĕр ăшă пултăр тесе тăхăнатпăр. Ăшă тунинђен пуçне тата кĕпейĕм ўттир çинђи тарпа çăва хăй çине илет. Анђах кĕпейĕм çав йапаласене хăй çине йаланах илме пултараймасť: сăхса çитсен, вĕсем тир çинех йулаççĕ.

Çавăнпа **кĕпейĕме ђасђасах улăштармалла. Кирек мĕнле пулсан та, ерне хушшинђе пĕр хут улăштармалла.** Çав пĕр ерне вăхăђĕ тата тепĕр йапалашăн те кирлĕ: кĕпейĕме пыйтăсем йерсен, вĕсем шăрка сапса, çав шăркаран ерне хушшинђе çĕнĕ пыйтă пулса тухаť. Çĕнĕ пыйтă тухнă çĕре улăштарса кĕл шывĕпе вĕрилесе çусан, пыйтăсем вилсе пĕтеççĕ.

Кĕпейĕме ђасђасах улăштарса тăхăнмалла, тата ăна тасарах çăвас пулаť. Çунă ђухне кĕпейĕме хурана йарса вĕри шывпа вĕретмелле, вара микропсем вилсе пĕтеççĕ. Вĕретнĕ ђухне кĕл шывĕпе, сĕлтĕпе, вĕретсен пит аван. Микропсене сĕлтĕ лайăх пĕтерет. Кĕпейĕме тўррех хурана йарса вĕретме йурамасť, апла хурасем хытса ларса, кĕпейĕм шуралма пĕлмест. Малтан сивĕ шыв çине йарса йĕпетсе лартмалла.

Хура кĕпейĕме **нихçан та вырăн айĕнђе,** сĕтел айĕнђе, кĕтессенђе, кухњăсенђе тыт-

малла мар, мĕншĕн тесен кĕпейĕм çинђи хурасем çĕрсе сывлăша пăсаççĕ. Ăна пўрт тулашĕнђе хупкăçлă йешђĕксенђе йе çатансенђе тытас пулаť.

Тата кĕпейĕме кашни килĕ уйрăм çуни те аванах мар. Пурте пĕр çĕре пухăнса çунине çитмест. Вара кĕпейĕм хурисем пур çĕре те сапаланса пĕтмест, пĕр çĕрте-çех пулаť. Хуласенђе çапла пурте пĕр çĕре пухăнса çума йури çавăн пек кĕпе çумаллисем тунă. Хăшхăш хуласенђе çавăн пек кĕпе çумаллисене пит аван тунă.

Çак таранђђен каланă сăмахсенђен таса пурăнма кирли курăнса тăраť. Анђах таса пурăнма çынна сăмахпа вĕрентме çук. **Таса пурăнма пĕђĕкрен вĕренес пулаť. Пĕђĕкрен вĕреннине çын кайран та пăрахмасť.** Пĕђĕкрен вĕренсе ўснĕ йăлана çын хавасланса тăваť. Ађана пĕђĕкрен таса пурăнма вĕрентесси амăшĕнђен килет. Ађа амăшĕ, хресђен арăмĕ, çавна аван пĕлмелле.

## Хурткăпшанкăсем—етем тăшманĕсем.

Ку таранђђен калани пĕтĕмпех марха. Пирĕн тата етемĕн „килти выђăхĕсем" çин-

ђсн, вĕсем ђыссăр кил таврашĕнђе, тасамар хуçисемпе пĕрле пурăнни çинђен те калас пулаť. Малалла пирĕн халап хурткăпшанкăсем—параçитсем çинђен пулаť. (Параçит тесе йут йунпа, йе йут сĕткенпе харам çисе тăранса пурăнакан ђĕрђунсене калаççĕ). Параçитсем ђыссăр килçуртсенђе, хура кĕпейĕм çинђе, таса мар тумтир çинђе пурăнаççĕ. Вĕсенђен паллисем çаксем: пăрçасем, хăнтăласем, пыйтăсем, таракансем, шăнасем, т. ы. Çак хурткăпшанкăсем çын таврашĕнђе пурри—етем тасамар пурăннине пĕлтерет. Каланă хурткăпшанкăсенђен нумайĕшĕ пит сийенлĕ: вĕсем урлă хăш ђухне вĕлерекен сикекен ђир те лекме пултараť. Хуткăпшанкăсем урлă ак çак ђирсем лекеççĕ:

1. **Пыйтă** урлă шатра тифĕпе тепĕр хут çавăрăнса пулакан тиф сарăлаť. Пыйтăсем ђире çапла сараççĕ: вĕсем ђирлĕ çынна çыртса илсе унăн йунне ĕмсе илеççĕ, вара сыв çын çине куçса ларсан, ăна çыртнă ђухне, хăйсен сĕлекипе пĕрле çав ђирĕн микропĕсене те йараççĕ. Микропсем сыв çын йунне лексенех, ăна ђирлеттерсе йараççĕ. **Шатра тифĕ пыйтăсем урлă анђах** йерме пултараť,

çавăнпа çак таранђђен—тиф шăннипе лекет тени, йе сывлăшран микроп лекнипе пулаť тени те ђăн мар.

2. **Тепĕр хут çавăрăнса пулакан** тиф пыйтăсем урлă анђах мар, **хăнтăласем** урлă та лекме пултараť.

3. **Ђеђђепе (шатрапа) ђума пăрçасем** урлă сарăлаççĕ. Ку ђирсем пит хăрушă, вĕлерме те пултараççĕ. Ђеђђе тиф пекех лекет: ăна ђирлĕ çын çинђен сыв çын çине пăрçа куçараť. Ђума урăхларах лекет: ђăн малтан пăрçа ђумапа ђирленĕ йĕкехӳрене йе сăвăра çыртмалла, вара тин хăй ӳрлă çав ђире сыв çын çине куçараť.

4. **Халер, вар тифĕ, йунлă варвитти, ђаххуткă** ђирĕсем **шăна урлă** сарăлаççĕ. Ку ђирсене шăнасем ак çапла йертеççĕ: вĕсем вĕçсе çӳренĕ ђухне, ђирленĕ çын кайашĕ, йе сурнă сурђăкĕ çине лараççĕ те, урисем çине тасамарлăха çыпăçтараççĕ, унпа пĕрле микропсем те çыпăçаççĕ. Унтан вара шăнасем вĕçсе кайса апат çине, йе шыв çине йе, сĕт çине ларса вĕсем çине микропсене лектерсе хăвараççĕ. Малалла мĕн пуласси паллă.

Ĕнтĕ епĕр каланă ҫирсем кам урлă йер-нине пĕлтĕмĕр. Ҫавăнпа етемĕн хăйне сийен кўрекен, ун йунĕпе пурăнакан параҫитсене ним шеллемесĕр пĕтĕм вăйĕпе пĕтерес пулаҭ. Вĕсене ҫĕнтерсен, малта каланă ҫирсем нумай сахалланĕҫҫĕҫ, вĕсен хушшинҫен — шатра тифĕпе тепĕр хут ҫавăрăнса пулакан тиф йăлтах пĕтме пултарĕҫҫĕ.

**Хурткăпшанкăсене мĕнле пĕтермеллеши?** Пуринҫен ҫăн лайăх май вăл—хамăра таса тытни. Етем таса пурăнсан, унăн килҫурҫĕ вараланмасҭ, мунҫана ҫасҫас ҫўресен, кĕпе-йĕме ҫасҫас улăштарсан, параҫитсене пĕтерме ытлашши майсемех те кирлĕ мар: таса пурăнсан вĕсем хăйсемех пĕтеҫҫĕ. Тасамара пĕтерме **супăҥ, вĕри шыв** тата **шҫуткă** — лайăх емелсем: вĕсем ҫирсене те пĕтереҫҫĕ, ҫире саракан параҫитсене те вĕлереҫҫĕ. Анҫах, хăш ҫухне, килҫурта пит тасамарлантарса йарсан, параҫитсене каланă майсем те ҫĕнтерейменҫĕ вара. Ун пек ҫухне урăх майсем кирлĕ.

Ҫав майсенҫен ҫăн йўнни, тĕрĕсси ак ҫакă: **пĕтĕм пўрт пĕренисене, сĕтел-пукан таврашне вĕрекен шывпа вĕрилес пулаҭ, кĕпейĕмпе тумтирпа те вĕретес пулаҭ. Кĕл**

**шывё (сёлтё) ҫинҙе вёретни таса шывра вёретнинҙен усăллăрах.**

Хăш ҙухне тата хурткăпшанкăсене урăх ҙăркашлăрах майсемпе те пётереҫҫё. Вăл майсене **теҫинфекси** теҫҫё. Теҫинфекси тунă ҙухне параҫитсене **пăспа йе хёрўпе ăшалаҫҫё, тата кёкёртпе формалин пăсёпе** те пётереҫҫё; кусемсёр пуҫне урăх вёлерекен имҫамсем те пур, вёсенҙен паллăраххисем ҫаксем: карпол супăнё, нафталисол, сулема, тата ыттисем те.

Теҫинфекси пит лайăх йапала, анҙах уна пур ҫын та тума пултараймасҭ: унпа айкашма емелсем те кирлё, пёлни те кирлё. Ҫавăнпа теҫинфекси тăвас тесен пёлекенсене пуљнитсаран ҙёнсе пырас пулаҭ.

**Таракансене „пура"** текен емел лайăх пётерет. Пурана ҫăкăрпа йăваласа пёҙик ҫавракасем тăваҫҫё, вара пёрене ҫурăкёсем умне (таракансем ларакан ҫёре) хурса тухаҫҫё. Анҙах кун пек тунă ҙухне ак мёне астăвас пулаҭ: пура вăл йат (вёлерекен емел), ҫавăнпа ҫăкăр ҫавракисене аҙасем, ҙăхҙёпсем йе выљăх тавраш ҫийесрен сыхланмалла.

Хурткăпшанкăсем пёрре пётернипе вилсе пётеймеҫҫё, ҫавăнпа вёсене темиҫе хут пёте-

рес пулат̆. Хурткăпшанкăсем çăмарта туса çăмартаран ĕрђеççĕ. Ернере çăмартаран çамрăк параçитсем çураласçĕ, вĕсем ан ĕрђеђђĕр тесен, ернерен ернене параçитсене пĕтерсе пырас пулат̆. Çак усал тăшмансенђен хăтăлас тесен, епĕр хамăра хамăр йаланах таса тытмалла.

Шăнасенђен хăтăлас тесен, кил таврашĕнђе тислĕкпе çӳпçап тытмалла мар, пухăна пуçласанах хăвăртрах катерме тăрăшмалла. Çӳпçапа пĕрмайах йешђĕксенђе тытас пулат̆, ăна вăхăтпа кăларса тăкмалла йе çунтарса йамалла, тенĕђђĕ.

Шăнасем выђăх картисем таврашĕнђе йе мăшкăлтăк шывсене тăкакан çĕрте пинĕ-пинĕпе пуранниие, çăмартисене тислĕкпе çӳпçап çине хунине те манас мар пулат̆. Вĕсем кунта ĕрђеççĕ.

Амерĕкре шăнасем пит сийенлине, çавăнпа вĕсене пĕтермеллине такçанах ăнланса илнĕ. Шăнасене пĕтерме унта ушкăнсем тунă, вĕренекен ађасемпе çамрăксем крушоксем тунă. Çак ушкăнсен усси ђасах палăрнă: вĕсем ĕçлеме пуçласанах, унта вар тифĕпе йунлă варвитти сахалланнă. Кил çурт таврашне таса

тытнинђен пуçне шăнасене пĕтерме тата урăх майсем те пур: вĕсене пĕтерме **çыпăçакан хут** лайăх, тата **шăна кăмпи** пит усăллă. Кăмпана вакласа турилкке çине хумалла та, шăнасене илĕртме турилкке çине пăртак шыв йарса сахăр сапмалла.

## Тасалăхпа сывлăх.

Хаљ ĕнтĕ, каланă хыççăн, етем сывлăхĕ йенђен тасалăх мĕнле усă кӳни, тасалăх мĕншĕн кирли витĕр курăнса тăраť. Епĕр ӳте тасамар, ђыссăр тытсан сывлăхлă пурăнăç курас çук. Çавăнпа, таса мар пурăнсан мĕнле ђирсем йерме пултарнине лайăх пĕлсе, астуса тăма çав ђирсем çинђен епĕр тепĕр хут каласа тухар.

Вĕсем хушшинђен пĕр ушкăн ђирсене **килçурта нађар тытнинђен пулакан ђирсем** теççĕ. Çак ђирсенђен ђăн малтан **сикекен ђирсем** çинђен калар. Вĕсем ак çаксем: ђăн малта—**шатра тифĕ, калла çавăрăнса пулакан тиф,** унтан — **ђаххуткă,** йулашкинђен — ађапăђа ђирĕсем: **хĕрлĕхен, тифтерит.** Çак ђирсем, ытти йерекен ђирсем пекех, пуринђен

ытла тăвăр, тасамар пӳртçуртра, тусанпа пылђăк нумай çĕрте, таса сывлăшпа хĕвел **çутти** сахал кĕрекен çĕрте пулаççĕ.

Ку ђирсем хыççăн тир ђирĕсем пыраççĕ; вĕсенђен ђăн паллисем: **кĕçĕпе кукша,** унтан тата **çăпансем,** т. ы. Çак ђирсем ӳте тасамар тытнăран анђах пулаççĕ. Кунтах тата куç ђирне—**траххома** асăнса илер. Траххом пит сарăлса кайнă йерекен ђир, вăл тасамар çуртра анђах пулат̆. Траххома пĕтерес тесен, ытти ђирсемпе кĕрешнĕ пекех, хамăра хамăр пит таса тытма тăрăшмалла, унсăр вăл инкекрен хăтăлаймăпăр епĕр.

Ђиртен пуçне тата тасамарлăх, ђыссăр пурăнни урăх йенђен те сийенлĕ: **вăл ђирсĕрех етем вăйне ђакарат̆.** Тасамар çĕрте етем нађарланат̆, ђăтăмлăхĕ ђакат̆, çавăнпа вара ĕмĕр те кĕскелет.

**Ĕмĕр вăрăм пултăр тесен, таса пурăнас пулат̆.**

Хăйсене хăйсем таса тытнăран çынсем сахалтарах вилнине епĕр ак мĕнтен асăрхама пултаратпăр. Иртнĕ Кермани вăрçинђе нимĕђсем патне плена—тыткăна лекнĕ вырăс салтакĕсем Керманире пленра пурăннă ђухне

вĕсен пурăнăç пит naђар пулнă. Вĕсене naђар çитернĕ, naђар пӳлĕмсенђе тытнă, тем пек йăвăр ĕçсем ĕçлеттернĕ. Çавăнпа пленнăйсем хушшинђе вилекен пит нумай пулнă. Пуринђен ытла ђаххуткăпа вар ђирĕсемпе вилнĕ.



Тасамар килçурт—ђирсене саракан выран вал. Тасалăхшăн тăрăшман пирки епĕр хамăр тавра ђирсемпе вилĕм саратпăр.

Тем ђул вилекен хушшинђе пĕри те шатра тифĕпе вилекен пулман, çавăнтан питех те тĕлĕнмелле. Çав вăхăтрах Раççейре, вырăс çар хушшинђе, тифпа тем ђухлĕ халăх вилсе пынă.

Вăл ак мĕншĕн çавăн пек пулнă мĕн: нимĕҫсем пленнăйсене таса тытас йенҫен пит тăрăшнă. Вĕсене ҫасҫас çăвăнтарнă, пуçĕсене шакла тытнă, хăйсенҫен тумтир панă.



Таса, тирпейлĕ тытсан, ҫухăн çын пӳртне те сывлăхлă тума пулаӑ. Иртнĕ карттин çинҫе кăтартнă пӳртех таса тытсан урăх тĕслĕ пулаӑ.

Таса тытнипе лакĕрсенҫе пыйтăсем пулман, пыйтă çукран тиф та пулман.

Çапах та--нимĕҫ çĕрĕнҫе тиф пĕртте пулман темелле мар: вăрçă пуçланнă çулах лакĕрсенҫе вĕсен те тиф пулкаланă. Ăна вырăс

салтакёсем (пленнăйсем) йертсе кĕнĕ мĕн. Нимĕҫсем ăна малтан сисеймен, мĕншĕн тесен вăрçă пуçланиҫҫен Керманире те, Анклире те, Франтсире те шатра тифĕпе кайалла çавăрăнса пулакан тиф çинҫен никам та пĕлмен. Халăх таса пурăннипе унта çав ҫирсем пулма та пултарайман. Çавăнпа нимĕҫем вĕсен лакĕрĕсенҫе пленнăйсем тифпа вилнине ҫасах ăнланса та илеймен. Тиф çинҫен нимĕҫсене вырăс тухтăрĕсем ăнлантарса кăтартнă: вырăссем вăл ҫирсем çинҫен вăрçăҫҫенех лайăх пĕлнĕ. Нимĕҫсем тиф ҫирĕ пыйтă урлă сарăлнине пĕлсенех, пыйта хирĕç май тупса ҫире ҫасах пĕтернĕ.

Сывлăх тасалăхран килни çакăнтан та паллă: халăх хăйне хăй таса тытакан патшалăхсенҫе йерекен ҫирсем, тир ҫирĕсем, куç ҫирĕ— траххом уйрăмах сахал; ҫыссăр пурăнакан патшалăхсенҫе, тасалăх çинҫен тăрăшман çĕрте, каланă ҫирсем нумайрах.

Ĕлĕкрех çав ҫирсем, акăлҫансем, хрантсуссем, нимĕҫсем хушшинҫе те нумай пулнă; вилекенсем те сахал пулман. Вăл ҫирсем тасамар пурăннăран пулнă.

## Ҫакна хытă астуса тăрар!

Пирĕн патшалăх пит пысăк револ̡утси туса иртерђĕ. Ҫав револ̡утсире тем ђухлĕ вăй пĕтерсе, тем ђухлĕ йун тăкса та пулин ҫĕнтерсе хамăрăн пурнăҫа ĕлĕк пурăннинђен лайăхрах тума ирĕк илтĕмĕр, лайăхлатма та пултаратпăр.

Лайăх пурăнăҫ вăл—сывлăхлă пурнăҫа та пĕлтерет. Епĕр револ̡утсиђђен тĕрлĕ ђирсемпе вилĕме тем ђухлĕ парне параттăмăр; пуринђен ытла вилекен вырăн Европăра пирĕн патшалăх пулнă: ҫуралакан ађасенђен пирĕн малтанхи ҫул хушшинђех ђĕрĕкĕ вилсе пĕтнĕ.

Сывлăхлă пурăнăҫ тумашкăн пирĕн ђăн малтан тумалли ĕҫ, ђи кирлĕ пысăк сатађ—**хамăра таса тытасси**. Унсăр пуҫне епĕр пĕр утăм та малалла кайайас ҫук.

**Тасалăх епĕр кашни кун астуса туса тăмалли йăла пулса кайтăр.** Ҫын ҫулталăкра 2—3 хут „пысăк праҫниксем“ умĕн анђах хăйне те, килҫуртне те тасатса йĕркене кӳни, урăх ђухне те таса тытмасан, таса пурăнни мар вăл. Пирĕн хушăра нумайĕшĕсем ҫапла ҫех тăваҫҫĕ.

Тасалăхпа ђыслăх кашни кун туса пымалла ĕç вăл, çавăнпа курăнман ĕç пек туйăнаť, анђах ђипер шухăшласа илсен—пирĕн ăна пысăк ĕçсен шутне кӳртмелле. Ку ĕçе лайăх туса пырсан—епĕр хамăр пурăнăçа сыхлатпăр, ĕмĕре ђăсатпăр, çутă, телейлĕ, ђирсĕр пурăнăç патнелле çывхарăпăр.

Ӳте, килçурта таса тытни тепĕр йенђен те усăллă: вăл çын кăмăлне, унăн ђунне çĕклет, ăсхакăлне çутăлтараť,—пирĕн çавна та манас мар пулаť.

Хамăра таса тытнă вăхăтра епĕр лайăхрах, куљттурлă пурăнăçпа пурăнатпăр. Таса килçуртра лайăх кĕнеке те вулас килет, малалла та вĕренес шухăш кĕрет. Вĕренни пире пит кирлĕ!

Наукка асăрханă тăрăх тата акă мĕн палăрнă: халăх мĕн ђухлĕ тасарах пурăнаť, мĕн ђухлĕ супăнђпе шыв ытларах пĕтерет, вăл çавăн ђухлĕ куљттурлăрах, хастарлăрах, çивĕђрех. Ђăнахах, тĕрлĕ халăхсен хушшинђе шыв кунне ак мĕнле пĕтет: Америĕк çынни кунне хăйне валли анђах 20 витре пĕтерет, акăлђан çынни—10 витре, Мускав çынни—6 витре, вырăс хресђенĕ икĕ витрене йахăн анђах пĕтерет.

Супăнĕ те çав майлах пĕтет. Ĕнтĕ куратăр: вырăс çынни шывне те, супăнне те пуринђен сахал пĕтерет.

Кун пек çак таранђђен пулнă. Анђах малалла кун пек пулмалла мар. Хаљ ĕнтĕ вырăс халăхĕ те хăй пурăнăçне çĕнетме пуçларĕ, вăл питĕ хастарлă вĕренме тытăнђĕ. Çав вĕренни, пĕлни ăна ĕлĕкхи усал пурăнăçăн тĕттĕмлĕхĕпе тасамарлăхĕнђен хăтăлма пулăшĕ, нумай та иртмĕ хăйĕн ĕлĕкхи тăшманĕсене çĕнтерсе çутă çул çине тухĕ.

Малашне вара пирĕн çĕрте те етем ытларах пурăнма пуçлĕ, ђирсем сахалланĕç, халăх сайрарах вилме пуçлĕ, вăл — таса пурăннăран пулĕ.

# ПЁЛТЕРНИ.

**СЫВЛĂХ ÇИНҪЕН КАЛАҪАН КĔНЕКЕСЕМ:**

**А. Ефремăв**—Траххом—ҫăвăш инкекĕ.

**А. Ефремăв**—Тапак сийенĕ.—15 пус.

**Фатейăва**—Ҫĕҫĕ аҫине пăхса ўстересси çинҫен.—8 пус.

**Романăва**—Сывлăха сыхласси.—45 пус.

**Çефирăв**—Йерекен ҫирсем.—15 пус.

**Роççийски**—Шăна ҫирсем сарать.

**Йевкрафăвă.** Йала траххом саракан Кăтав карҫăка сут туни.—24 п с.

**Йевтокимăв.** Йалти сывлăх комиççисен мĕн ĕçлемелле.—25 пус.

**Ваççилйĕвски**—Сывă пул та, хатĕр пул!—25 п.

**Çапăнса тухаççĕ.**

**Н. Никольский.** Народная медицина у чуваш.

**Корпăв** тухтăр—Таса пурăнни сывлăха сыхлать.

Адреса: г. Чебоксары, ЧАССР, Народный Комиссариат Здравоохранения и Чувщгосиздат, Малая Советская, 15.

Хакĕ 18 пус